Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N17 (4586) *1998 çулхи февраль (нарăс) уйăхĕн 13-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Кăтартусем ӳснĕ, пахалăха та лайăхлатмалла

**(Район администрацийĕн пуçлăхĕн Ф.С.Сибагатуллинăн "Районăн 1997 çулхи экономикипе социаллă пурнăçĕ аталаннин итогĕсемпе 1998 çула палăртнă задачăсем çинчен" тунă отчечĕ).**

Иртнĕ çул пирĕн çулĕр аталанăвне тата экономика реформисене пурнăçа кĕртессине тĕрĕслемелли çулталăк пулчĕ. Предприятисемпе организацисен, хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсен ĕç коллективĕсем промышленность тата ял хуçалăх производствине çирĕплетессипе тата туса кăларакан продукцин калăпăшĕсене ӳстерессипе 1997 çулта çине тăрса ĕçленĕ.

1997 çулта районта **промышленность продукцине туса кăларнин пĕтĕмĕшле калăпăшĕ** 66,8 миллиард шутланнă, пăхса хăварнă вара - 839,4 миллиард тенкĕ. Халăха кирлĕ таварсен ӳсĕмĕ, пĕлтĕрхи шайпа танлаштарсан, 108,2 процент шутланнă, вĕсенчен 62 процентĕ апат-çимĕç таварĕсене тивет. "Нурлатнефть" НГДУ 682079 миллион тенкĕлĕх продукци тунă е, 1996 çулхипе танлаштарсан, 129,6 процент, 1552 пин тонна нефть уçласа илнĕ, планран ирттерсе - 79,7 пин тонна. "Нурлатнефть" НГДУ питĕ пысăк налук тӳлекен пулса тăрать. Район бюджетне кĕнĕ мĕнпур налукăн 32,3 процентĕ нефтьпе газ кăларакан управление тивет. Нефть предприятийĕсенчен налук кĕнине тишкерсе тухни çакна кăтартса парать: пĕр скважинăшăн НГДУ район бюджетне 38,8 миллион тенкĕ налук тӳленĕ, "Зузеевнефтепром" - 1,2 миллион тенкĕ, НГДУ РИТЭК - 14,2 миллион тенкĕ.

Производствăра позитивлă улшăнусем пулнă пулин те, "Нурлатнефть" НГДУ коллективăн тата хулан социаллă пурнăçне аталантарас ыйтусене татса парассипе çителĕклĕ ĕçлемест.

Çулталăк итогĕсемпе "Татнефть- Нурлатнефтешырав" ООО коллективĕ хăшпĕр ăнăçлăхсем тунă: пăраламалли плана 91189 метр, урăхла каласан, 104,2 процент пурнăçланă. Сахăр завочĕ 201453 тонна тутлă тымар ĕçлесе хатĕрленĕ. Таварлăх продукци планне 103,6 процент пурнăçланă, сахăр тухăçлăхĕ 13 процент шутланнă, нормăпа вара 12,05 процент. Машинăсем тăвакан заводăн пĕтĕмĕшле продукцин пĕрлехи калăпăшĕн 50 процентне анлă илекен КБМ-10,5 тата КБН-8,5 культиваторсем йышăннă. Тĕрнеçри спирт завочĕн коллективĕ те ăнăçлă ĕçлерĕ, унта продукци туса кăларассин калăпăшĕ, 1996 çулхи шайпа танлаштарсан, 2,2 хут ӳснĕ. Ĕç рентабеллĕхĕ 15 процент шутланнă. Хуçалăхсем сĕт суса илессине тата сутассине ӳстернипе сĕт-çу комбиначĕ те лайăх кăтартусем турĕ. Таварлăх продукцин калăпăшĕ кунта, 1996 çулхи шайпа танлаштарсан, 133 процент шутланнă. Çăкăр завочĕ 1485 тонна продукци туса кăларнă. Талăкра 22 тĕрлĕ 4,1 тонна çăкăр-булка изделийĕсем пĕçерсе кăлараççĕ. Нурлатри аш-какай комбиначĕ пĕтĕмĕшле продукци 24096 миллион тенкĕлĕх туса кăларнă, 21610 миллион тенкĕлĕх сутнă. 3060 миллион тенкĕ тупăш илнĕ. Выльăхсене пуснă, аш тата аш продукчĕсем унччченхи çулхи шайран 7 процент ытларах туса хатĕрленĕ. Аш-какай комбиначĕн коллективĕ 1998 çулта кăлпасси цехне çĕнетсе талăкра 7 тонна хатĕр продукци кăларакан ют çыршывра туса хатĕрленĕ оборудованипе усă курма тытăнма шутлать, çакă кăлпасси изделийĕсен ассортиментне 25-рен 50 çити ӳстерме май парĕ. Нурлатри чугун çул станцийĕн коллективĕ те çулталăка начар мар кăтартусемпе вĕçленĕ, çав шутра тиемелли ĕçсен планне 103,6 процент пурнăçланă. "Нурлатри АТП" акционер обществи те палăрмалла лайăх результатсем тунă, унта тиевлĕ автомобильсен паркĕпе усă курнин коэффициенчĕ, 1996 çулхи шайпа танлаштарсан, 121 процент шутланнă. Клиентсене тивĕçтерессин планне те 100 процент пурнăçланă.

Çавăнпа пĕрлех хăшпĕр предприятисенче производствăпа хуçалăх тата финанс çыхăнăвĕсем татăлнипе хатĕр продукци сутас тĕлĕшпе йывăрлăхсем сиксе тухнă. Продукцие туса кăларассин калăпăшĕсем чакнă. Производство хăватлăхĕсемпе 30-50 процент чухлĕ кăна усă курнă. Тĕслĕхрен, суту рынокĕ пулманнипе элеваторăн комбикорм туса кăларакан завочĕн хăватлăхĕпе 31 процент чухлĕ кăна усă курнă, комбикорм туса кăларасси вара, 1996 çулхипе танлаштарсан, 26 процент çеç. Нурлатри вăрман хуçалăхĕ таварлăх продукцие 1996 çулхинчен 13,3 процент сахалрах туса кăларнă. Йывăç тата вут-шанкă хатĕрлес план-заданисене те пурнăçламан.

Анализ кăтартнă тăрăх, иртнĕ çул предприятисен финанс лару-тăрăвĕ ытлашши лайăхланман. Хăшпĕр предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ тата рентабеллĕх чакни палăрать. Таварлăх продукцин пĕр тенкишĕн тăкаклани ӳсет. Тăкаксемпе ĕç укçи юлашки результатсемпе çыхăнса тăмасть. Çакăнта вара ертӳçĕсемпе специалистсен рынок экономикине куçнă вăхăтри механизмсене алла илмелле, халăха кирлĕ продукцие туса кăларассин бизнес-планне туса хатĕрлеме тата пурнăçлама пĕлмелле, ăна вăхăтлă та тупăшлă сутма майсем шырамалла. Йывăрлăхсене пăхмасăр, районта **тĕплĕ строительство ĕçĕсем** пыраççĕ. Районта 1997 çулта 224 миллиард ытла тенкĕлĕх çуртйĕр тунă, çав шутра производство объекчĕсене тума 190,8 миллион тенкĕ тăкакланă. Тĕп подряд организацийĕсем строительствăпа монтаж ĕçĕсене пурнăçлама 57,1 миллиард тенкĕ тăкакланă. Пурăнмалли 118 çурт (пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 24406 тăваткал метр) хута янă.

1996 çулхипе танлаштарсан, подряд ĕçĕсене анлăлатнă, Нурлатри РСУ-16 процент, 127-мĕш ПМК-10 процент, ытти строительство организацийĕсем вара чакарнă.

Выльăхсене кăкармасăр усрас тĕлĕшпе фермăсене юсаса çĕнетесси, тăкаксене хирĕç механизма кĕртесси тата пăрусене сивĕ меслетпе пăхасси ялти строительсен кăçалхи тĕп задачи пулса тăрать.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**"Татнефть" АО хыпарĕсем**

## Ĕçлеме те, канма та пĕлеççĕ

"Татнефть" акционер обществин ĕçченĕсен VIII спартакиадине, мартăн 1-мĕшĕнче ирттерме палăртнăскере, хутшăнакансене пысăк та тĕрлĕ енлĕ программа кĕтет. Вун-вун йышши спорт ăмăртăвĕсем ирттерме палăртнă - йĕлтĕрпе чупасси, кĕрешесси, волейболла выляссии, чупасси - тата кашнинче хăйĕн çĕнтерӳçине палăртĕç. Нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин коллективĕнче спартакиадăна хутшăнма активлă хатĕрленеççĕ: спортсменсен составне суйласа йĕркелеççĕ, тренировкăсем ирттереççĕ, экипировка ыйтăвĕсене татса параççĕ - пирĕн нефтьçĕсен тумĕ тивĕçлĕ шайра пулмалла тата вĕсем малти вырăнсене йышăнма тăрăшмалла.

## "Тутарстанăн нефть пики-98" мĕн ятлă?

Пирĕн корреспондента "Татнефть" акционер обществинче пĕлтернĕ тăрăх, VIII спартакиадăна ирттерме халалланă мероприятисен комплексĕн тĕп пайĕ акционер обществин подразделенийĕсем хушшинче "Тутарстанăн нефть пики-98" конкурс ирттересси пулса тăрать. Тĕп тĕллев - çамрăксене эстетика воспитанине парасси тата пушă вăхăтне усăллă йĕркелесси. Обществăн кашни подразделенийĕ конкурса илемлĕ те яштака пӳ-сине кăна мар, хăйне тыткалама пĕлекен, ăс-хакăлне те кăтартма пултаракан хĕре тăратĕ. Конкурс заданийĕсене - вĕсем тăваттă - унта хутшăнакансем артистла тата хореографи пултарулăхне кăтартассине кĕртнĕ.

Парнесене тивĕçлипех ăмсанма пулать. Нефть пики Франције туристла путевкăпа кайĕ, унпа ăмăртнисенчен темиçе хĕр видеодвойка, видеокамера илĕç, куракансем кăмăлланисене те парнесĕр хăвармĕç. Хавхалантаракан призсем те парĕç.

Нефть патша майри мĕн ятлă тата ăçта пурăнать-ши?

## Ăçта мĕн чухлĕ сĕт сунă?

***Цифрăсен пĕрремĕш графи - январь уйăхĕнче пĕр ĕнерен вăтамран сĕт суса илнĕ, иккĕмĕшĕ - пĕлтĕрхи шайран ытларах е сахалрах (килогрампа).***

| | | |
|---|---|---|
| "Дуслык" | 515 | +52 |
| "Кондурча" | 437 | -37 |
| "Агрохимсервисăн" х/х | 349 | +82 |
| Синдряков яч. хис. | 347 | +116 |
| Мичурин яч. хис. | 343 | +64 |
| "Рассвет" | 309 | +18 |
| "1 Мая" | 302 | +124 |
| "Родина" | 284 | +4 |
| Хафизов яч. хис. | 274 | +2 |
| Сахăр завочĕн х/х | 254 | +24 |
| "Татарстан" | 254 | -28 |
| "Тĕрнеç" | 253 | +101 |
| "Черемшан" | 241 | +13 |
| "Киклĕ" | 235 | +47 |
| "Çуткӳл" | 218 | +5 |
| "Заветы Ильича" | 213 | -50 |
| М.Джалиль яч. хис. | 208 | -48 |
| "Игенче" | 202 | +46 |
| РСУн х/х | 200 | +38 |
| "40 лет Победы" | 197 | +14 |
| "Заря" | 191 | +6 |
| Кузнецов яч. хис. | 184 | -11 |
| "Элмет" | 151 | +13 |
| "Тан" | 148 | +18 |
| "Комбайн" | 144 | +28 |
| "Алга" | 140 | +31 |
| "Урняк" | 140 | -41 |
| Сĕт-çу комбиначĕн х/х (2) | 127 | -34 |
| Нефтебазăн х/х | 102 | -33 |
| "Строитель" | 71 | -64 |
| **Район тăрăх** | **222** | **+19** |

Иртнĕ çула ăнăçлă вĕçленĕ ĕçченсем февраль уйăхĕнче сĕт суса илессине ӳстерсе пыраççĕ, çак кунсенче пĕр ĕнерен вăтамран 8,2 килограмм суса илеççĕ, ку пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 1,1 килограмм ытларах. Районти хуçалăхсем хушшинче малтанхи пекех "Дуслык" малта пырать, кунта пĕр ĕнерен талăкра вăтамран суса илнĕ сĕт 18,6 килограма çитет, "Кондурчара" çак кăтарту 15,8 килограмм, "Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕнче тата Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхра - 12,1-12,5, Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхра - 11,8, "Родина", "1 Мая", "Рассвет" хуçалăхсенче - 10,3-10,6 килограмм. Çав вăхăтрах нефтебазăн хушма хуçалăхĕнче, "Урняк", "Алга", "Элмет", "Тан" хуçалăхсенче пĕр ĕнерен талăкра сунă сĕт 4,6-5,8 килограмм çеç, МСОн хушма хуçалăхĕнче çак кăтарту тата та пĕчĕккĕрех.

# Юбилей ячĕпе, Гакиль!

Самарпа Ульяновск облаçĕсен, Тутарстан Республикин тутар общественноçĕн пуçарăвĕпе çак дата халалланă мероприятисем йĕркелес тĕлĕшпе комитет тата юбилярăн фондне йĕркеленĕ.

Гакиль Сагиров - сăвăсен виçĕ пуххин, çĕр-çĕр ÿкерчĕксен, калавсен авторĕ. Унăн тăваттăмĕш пуххи те пичете хатĕр. Самарта тутарла тухса тăракан "Бердэмлек" хаçатăн пĕрремĕш номерĕсенченех вăл унăн кулленхи тата активлă корреспонденчĕсенчен пĕри.

***Паллă поэт, художник, журналист Гакиль Сагиров 1998 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче 60 çул тултарать.***



Манăн сĕтел çинче Александр Пушкинăн, Михаил Лермонтовăн, Габдулла Тукайăн, Муса Джалилĕн сăввисен пуххисем выртаççĕ. Кăмăл начар, ĕç ăнман вăхăтра эпĕ вĕсене алла тытатăп. Тĕлĕнмелле, кăмăл уçăлать, пурнăçпа савăнас килет, шанчăк çуралать...

Гакиль Сагиров поэтăн "Çепĕç кĕвĕсем" пуххи те çакăн пек туйăмсем вăратать. Сăвăсене ансат та ăнланмалла чĕлхепе çырнă, сăмахĕсем чĕререн тухнă пек туйăнаççĕ. Вĕсем паллă поэтсен кĕвĕллĕ те питĕ лайăх произведенийĕсем пекех, вулакансенче çутă та ырă туйăмсене çуратаççĕ.

Гакиль мĕн çинчен çырсан та - пĕрремĕш юр, çурхи аслатиллĕ çумăр, тăван килуменчи тирексем, юлташсем çинчен - вăл пурнăçа мухтать, хаклать. Унăн творчествинче хуйхă, куляну, тата памалла мар ыйту çук.

Унăн сăввисене вуланă май чечеке ларнă çĕмĕртĕн, çурхи чечексен шăршине туятăн, Çарăмсан шывĕнчи хумсен, çурхи пĕчĕк юханшывăн, кĕрхи йывăç çулçисен шавне илтетĕн. Унпа пĕрле ху та савăнатăн, хуйхăратăн, юрататăн.

Кашни ĕмĕрте пысăк талантсем çуралмаççĕ, анчах та вăхăт çитсен вĕсем палăраççĕ те тĕлĕнмелле произведенисемпе çынсен ăсхакăлне пуянлатаççĕ.

Пултаруллă та уçă кăмăллă, анчах та инкеклĕ шăпаллă Гакиль Сагировăн творчестви те çапла. Унăн сăввисемпе ÿкерчĕкĕсене шăлсем хушшине хĕстернĕ кăранташпа çырнă.

15 çулта чухне çурăм шăммине ăнăçсăр операци тунă хыççăн Гакиль яланлăха çÿреймиипулнă, пÿрнине те хускатайман, пуçне те çеç кăшт пăрма пултарнă...

Чире пула пĕтĕм çан-çурăмĕ чăтма çук ыратнă. Вăл мĕнле асапланнине амăшĕ, Хабибжамал аппа, çеç пĕлет. Амăшне юратса, тав туса çырнă сăвăсене хумханмасăр вулама çук.

Мĕн пулăшнă-ха ăна? Хабибжамал аппа чăн-чăн мусульманка пулнă май çын шăпа мĕн пÿрнине чăтăмлă тата тивĕçлĕ чăтса иртермелле тесе шутлать, алла усса шанăçа çухатмалла мар. Хăй те вăл, вăрçăра мăшăрне çухатса пĕчĕк ачисемпе юлнăскер, çапла пурăннă.

Выранпа выртакан Гакиль Мускаври искусствăсен халăх университетне заочно вĕренме кĕрет те ăна питĕ лайăх паллăсемпе пĕтерет. Тутарстанти Çамрăксен хаçачĕ ăна юмористсен конкурсĕн çĕнтерÿçи пулнине пĕлтерет, вĕсем вăл вăхăтра çак хаваслă авторăн шăпи çинчен пĕлмен-ха. Кушкă районĕнчи Кивĕ Фейзуловăри шкулта вĕренекенсем Гакиль ертсе пыракан фотоçă, ÿкерчĕксен кружокĕсене çÿресе ÿснĕ. Ача чухне телевизор мĕн иккенне пĕлмен пулин те, килтисене ăна юсама вăл сăмахпа пулăшать. Гакиль хăйĕнпе пĕртăванĕн ачине... автомобиль çÿретме те вĕрентнĕ. Сагировсен çемйи яланах çынсене ырă суннипе, вĕсен шухăшĕсемпе, ларутăрупа интересленнипе палăрса тăрать. Çавăнпа та пулĕ вăл çыракан сăвăсем ырă кăмăллă, чуна тасатса çÿле çĕклеççĕ, вăй хушаççĕ.

Унăн поэзийĕ - вăрманти çăлкуç евĕр - таса, уçă, чуна пусăрăнтарать.

Çак поэзийĕн тĕслĕхĕсем çинче тутар чĕлхи аталанать, тăван культура пуянланать. Чылай ăру унран чăтăмлăха, хастарлăха вĕренĕç. Çавăнпа та поэтăн 60 çулхи юбилейне палăртасси пирĕн пурнăçра паллă событи пулса тăрать.

Гакиле тата хисеплĕ Хабибжамал аппана сывлăх, вăрăм та телейлĕ пурнăç, творчествăра ăнăçлăхсем сунатпăр.

**Альфия ШАФИГУЛЛИНА.**

**("Бердэмлек" хаçат).**

**Ÿкерчĕкре: Гакиль Сагиров амăшĕпе.**

**Анас Мингалиев сăнÿкерчĕкĕ.**

# Ылтăн алăллă ăстаçă

Заречнăй поселокне эпĕ ирхинехи пĕрремĕш автобуспа çитрĕм. Кунта эпĕ часчасах пулатăп, мĕншĕн тесен вăл мана питĕ çывăх. Кунти тавралăх та илемлĕ. Кăнтăр-хĕвеланăç енчи урам Çарăмсан хĕррипе тăсăлать, урамăн тепĕр енне вăрман хупăрласа илнĕ. Çутçанталăк вара халапри пекех. Урамра сивĕ. Мăръесенчен тĕтĕм мăкăрланать. Хăшпĕр ялсенче кăмака тăвакансем çук тенине илтме пулать, кунта вара вĕсем темиçен, вĕсенчен пĕри - Иван Григорьевич Паргунькин. Эпĕ вара шăп кăна ун патне кĕтĕм. Çурчĕ таçтанах курăнса ларать, ăна тĕрлĕ тĕссемпе сăрланă, чÿречесене тăрăшса капăрлатнă, уйрăмах балконне. Кил хуçи мана хăйĕн мăшăрĕпе Вера Валентиновнапа пĕрле кĕтсе илчĕ. Сăмавартан чей ĕçнĕ май эпир калаçса кайрăмăр. Иван Григорьевич хăй Димитровградран 40 километртра вырнаçнă Никольско-Çарăмсан районĕнчи Чувсускан ялĕнче çуралса ÿснĕ. Каярах çемье кунта куçса килнĕ. Вăрçă пуçлансан, вăрманпромхозра хĕçпăшал валли "болванкăсем" - винтовкăсемпе автоматсен приклачĕсене туса кăларма тытăннă. Паргунькин хăма çуракан заводра мастер пулса тăнă. Хусанта шоферсене вĕрентекен курсран вĕренсе тухнă хыççăн 3 çул хушши газогенератор машинипе ĕçленĕ. Çак газген вĕсене мĕнле тарăхтарнине Иван Григорьевич шÿт евĕрлĕ каласа парать. 1954 çулта ăна вăрманпромхоз директорĕ Н.Н.Мухарбеков хăй патне чĕннĕ те Йошкар-Олана крановщика вĕренме кайма сĕннĕ. "Эсĕ тата ăçта вĕреннĕ?" - тесе ыйтрăм эпĕ. "Шофер - ку манăн тĕп специальность," - терĕ вăл. Курс пĕтернĕ, çапла майпа манăн столяр-платник, тимĕрçĕн VI разрядри удостоверенисем пур. Кăмака та кăларма пултаратăп.

Ку тавраpа çакăн пек ăстаçă çинчен пурте мухтаса калаçаççĕ. Вăл питĕ сăпайлăскер, яланах пулăшма хатĕр.

Çемьере тăватă ывăл, виççĕшĕ аслă пĕлÿ тунă. Александр Бурятире ĕçлет, Владимир Чулпанти больницăра врач пулса вăй хурать. Иван Ульяновскри политехника институтĕнчен вĕренсе тухнă, ăçта ĕçлеме ярасса кĕтет.

Иван Григорьевич наянсене юратмасть. Хăй вăл вăйне шеллемесĕр тăрăшать. Картишĕнче те йĕркелĕх хуçаланать. Вĕсем ĕне, вăкăр, сурăхсем, сысна çурисем тата чăхсем усраççĕ. Сурт йĕри-тавра пысăк сад, кăмпа, çырла вара вĕсем çумри вăрмантан пуçтараççĕ.

Иван Григорьевичăн çаплах художник пултарулăхĕ те пур. Вăрманта вăл кашни тункатана, кашни йывăç вуллине çинчи кăтрашкана асăрхать те килне илсе килет, пуртăпа каскалать, якатать те туратран вĕçен кайăк е мĕнле те пулин чĕр-чун сăнарĕ пулса тăрать.

Февралĕн 2-мĕшĕнче Иван Григорьевич Паргунькин 70 çул тултарчĕ. Вăл кăмăл-туйăмĕпе те, ÿт-пĕвепе те çирĕп-ха. Лара-тăра пĕлмест. Хуçалăхри ĕçсене пурнăçланисĕр пуçне мастерскойра та тăрăшать. "Ылтăн алăллă" ăстаçа çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телей сунатпăр.

**В.КОМОЛОВ.**



# Судпа айăпланакансен сакки çинче - 15 çулхи ача

**• Суд залĕнчен**

***Февралĕн 6-мĕшĕнче Нурлат районĕн суд залĕнче 104788 номерлĕ уголовнăй ĕç тĕлĕшпе суд следствийĕ вĕçленчĕ. Хăй вăхăтĕнче ку инкеклĕ факт пирĕн район халăхне çеç мар, ыттисене те питĕ хумхантарчĕ.***

Ку ĕç пĕлтĕр сентябрĕн 22-мĕшĕнче ирхине пулса иртнĕ. Çуллахи уяр çанталăкри аслати евĕр. Нимĕнпе те уйрăлса тăман уйăх пыратчĕ, кĕрхи çумăр тытăнманччĕ-ха, ноябрь уйăхĕнчи каникул инçе пек туйăнатчĕ. Диктантсем, лаборатори занятийĕсем, шкулти кĕске переменăсем... Шăпах çавăн чухне, иккĕмĕшпе виççĕмĕш уроксем хушшинче пулса иртнĕ те ĕнтĕ çак ĕç. 11"а" класри Ильназ Идрисов вуннăмĕш класра вĕренекен Ильфат Ишмаева коридора чĕнсе кăларнă, кĕске калаçу хыççăн Ильфат малтанах хатĕрлесе хунă çĕççе кĕсъйинчен кăларнă та ăна чикнĕ. Пĕрре, иккĕ, виççĕ, вуннă... Пĕрремĕш хутри учительсен пӳлĕмĕн алăкĕ умĕнче вара вăл Ильназа вĕлернĕ. Унччен те чылай хăрушă ĕçсем курнă оперативниксем кăкăртан, хырăмран, çурăмран чикнĕ 17 суран шутласа кăларнă. Çав кунах район прокуратуринче следстви пуçланнă. Ильфат Ишмаева, свидетельсене - шкулта вĕренекенсемпе учительсене, ашшĕ-амăшĕсемпе юлташĕсене ыйтса тĕпченĕ, криминалистсен тата комплекслă суд экспертизисем ирттернĕ, айăпланакан тата инкек тӳснĕ ачасене тĕплĕн тишкернĕ. Кĕскен каласан, следстви ĕçĕ пынă. Пĕрремĕш допросра Ишмаев каласа панă тăрăх, темиçе кун малтанах Идрисов ăна "шуйттан" тенĕ, çавăнпа та ăна вăл тавăрма шут тытнă, каярах вара Ильназ ăна хĕненине, укçа ыйтнине, пируспа чăмлак туянма вăйпа çӳреттерни çинчен те каласа панă. Кăна вара Ишмаев юлташĕсем тата ытти вĕренекенсем çирĕплетмен. Шкулта кам мĕнле пулнине, кам пуçлăх тата кам кама пăхăнса тăнине питĕ тĕрĕс палăртаççĕ. Референдумсемсĕр тата социологи тĕпчевĕсемсĕрех. Уççăн тата вăрттăн сасăламасăрах. Ку политика мар. Анчах та питĕ тĕлĕнмелле ĕç. Мĕнпурне шута илсен, Ильназ мала тухма тăрăшакансен шутĕнче пулман. Иккĕшĕ те шкулта та, килĕсенче те йĕркеллĕ пулнипе палăрнă.

Ильназăн ашшĕ Минвазых Вагизович Идрисов:

- Ывăлпа эпĕ яланах кăмăллăччĕ, нихăçан та ӳпкелешмен. Эпĕ шкулта та пулнă. Поведенийĕ лайăхчĕ. Вĕренме вăтам вĕренетчĕ, ӳсме те, ытти йĕркеллĕ ачасем пекех ӳсрĕ. Вак-тĕвек тăкаксем валли укçа яланах параттăмăрччĕ.

Ильфат амăшĕ, Зульфира Минихановна Ишмаева:

- Ывăлăн кăмăлĕ лăпкă, ютшăнчăк, калаçма та юратсах каймасть. Ăна аяккинчен ятланине илтмен. Чишмара пурăнакан кукамăшне хуçалăхри ĕçсене пурнăçлама пулăшатчĕ.

Елена Ивановна Тахтаманова, 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулти информатика учительници, 10"г" класс руководителĕ:

- Ку класа эпĕ сентябрь уйăхĕнче кăна йышăнтăм. Çак вăхăт хушшинче эпĕ Ишмаев çинчен сахал пĕлнĕ, апла пулин те, вăл хушнине пурне те пурнăçлатчĕ. Уроксенче хăйне лăпкă тытатчĕ, класс заданийĕсене те пурне те пурнăçлатчĕ.

Кĕскен каласан, йĕркеллĕ ачасем. Ильфат та хирĕçсе каяканни мар, хăйне хăй тытма пĕлнĕ. Вăл пĕрре те çын вĕлерекен пек мар. Залра айăпланакансен сакки çинче çӳлех мар йĕкĕт ларатчĕ. Çаврака пичĕ çинче ача чухнехи хĕрлĕ тĕс те кайман-ха. Сăнĕнче те, сăмахĕсенче те хаярлăх пурри туйăнмарĕ. Çаплах - йăваш пулни те. Анчах та 15 çулти ачан çавăн чухлĕ хаярлăх çын вĕлермеллех чунсăрлăх ăçтан тухнă-ши? Пĕр чиперкке свидетельница суд залĕнче çапла каларĕ: "Ишмаева пĕлмен пулин те, эпĕ ăна айăпламастăп. Ăна тарăхтарса çитернĕ ĕнтĕ, хăй мĕн тунине вăл хăйех пĕлет". Залра çакна икĕ майлă йышăнчĕç. Шăппăн шавлани илтĕнсе кайрĕ, çавăнтах çамрăксенчен пĕри: "Тĕрĕс!" - терĕ. Çак çамрăк çине пысăк практикăллă профессионал адвокат тинкерсе пăхрĕ, суд ларăвĕн секретарĕ пуçне пăркаларĕ, халăх заседателĕсем пичĕ-куçĕсене пĕркелентерчĕç. Аслă суд судйи те питĕ тĕлĕнчĕ пулас, тепĕр ыйтăвне тӳрех параймарĕ. Мĕншĕн çапла каларĕ-ха çак чиперкке? Кӳрентерчĕç пулсан, тавăрмасăр ан хăвар, кас, пер, вĕлер тенине пĕлтерет-и ку? Пирĕн юратнă ачасем, мĕн пулса тухать-ха капла? Малашне çывăх çынна ырă сунасса шанăç та çук апла.

Ку кăмăл-туйăм енчен ĕнтĕ. Фактсем вара çакăн пек. Айăпланаканăн юлашки сăмахĕ çыхăнуллă та кĕске пулчĕ.

- Çакна эпĕ мĕншĕн тата мĕнле тунине пĕлместĕп. Питĕ хаяр ĕç тунине халь ăнланатăп. Айăплăр, çапах та, тархасшăн, хĕрхенĕр...

Пĕр сехетрен суд коллегийĕ приговора виларĕ. Суд Ильфат Ишмаева айăплă тесе йышăнчĕ, кураймасăр юри вĕлернине çирĕплетрĕ. Ăна айăпласа воспитани паракан пĕрлехи режимлă колоние 10 çуллăха ямалла тунине тĕрĕс тесе йышăнчĕ. Мораль енчен сиен кӳнĕшĕн Ильфат ашшĕ-амăшĕнчен 43 пин тенкĕ (деноминациленĕ укçапа) шыраса илмелле тунă.

... Ильфат Ишмаевăн срокĕ 1997 çулхи сентябрĕн 24-мĕшĕнчен шутланма пуçланнă.

**Т.НАЗАРОВА.**

## Сăнаса тăман

**01 ПĔЛТЕРЕТ**

Февралĕн 2-мĕшĕнче 16 сехетре пушар чаçне сахăр вĕретекенсен поселокĕнче вырнаçнă перекет банкĕн филиалĕн чӳречинчен çăра тĕтĕм мăкăрланни çинчен пĕлтернĕ. Пушарниксем вырăна çитсен алăксене питĕрнине курнă, çавăнпа та РОВД ĕçченĕсене йыхăрса илме тӳр килнĕ.

Вĕсем 3 минутран вырăнта пулнă. Тĕтĕмĕн сăлтавĕ 53-мĕш СМУ ООО бригади электричествăпа шăратса çыпăçтармалли ĕçсене правилăсене пăхăнмасăр пурнăçлани, кайран вара çак вырăна сăнаса тăманни пулнă. Пушар хăрушсăрлăхĕн правилисем тăрăх вара кунти лару-тăрăва сехет хушши контроллесе тăмалла пулнă.

**ПĔЛТЕРӲСЕМ**

*Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер е икĕ тата пĕр пӳлĕмлисемпе улăштаратпăр. Адрес: Советская урамĕ, 195-15.*

* * *

*1997 çулта туса кăларнă çĕнĕ ВАЗ-21074 сутăнать, "симĕс сад" тĕслĕ. Тĕрлĕ формăпа тӳлеме пулать. Телефон: 5-25-23, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

***Нурлат хулинчи пичетсемпе штампсем***

*Нурлат типографийĕ кĕске вăхăтра паха пичетсем, штампсем тата факсимилесем тăвать. Телефон: 2-15-16.*

* * *

*1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-21063 васкавлă сутатпăр. Адрес: Шашин урамĕ, 15-2, телефон: 5-21-90, 18 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-20-68.*

* * *

*Лайăх шайри МАЗ-5549 (самосвал) автомашинăна "Жигулипе" е "Нивăпа" улăштаратăп е сутатăп. Адрес: Димитров урамĕ, 36, телефон: 5-42-62, Ивановсене ыйтмалла.*

* * *

*"Альянс" магазин (апат-çимĕç пасарĕ) тата "Елена" магазин (япала сутакан пасар) 1-2-3 камерăллă "Стинол", "Норд" холодильниксем сутаççĕ. Тĕрлĕ модификациллĕ, шанчăклă, гаранти 2 çул, Нурлатра тата кӳршĕ районсенче пурăнакансене тӳлевсĕр çитерсе паратпăр. Телефон: 5-41-19.*

* * *

*Кивĕ Чаллăра дача участокĕ сутăнать. Телефон: 5-19-52.*

* * *

*Сутатпăр:*

*Хĕç-пăшал хумалли çунман, кассăллă тата кассăсăр сейфсем, сантехника, хуçалăх таварĕсем, 60 килограмм тюклĕ чӳпĕк - 280 тенкĕ, курттăмăн илсен йӳнерех. ЗИЛ-130 двигателĕ, 18-20 пин тенкĕ. Адрес: Нурлат хули, Дружба урамĕ, "Яшьлек" кафе, 1-мĕш хут.*

***Аксури вăрман хуçалăхĕ курттăмăн тата ваккăн сутать:***

*арболит блокĕсем - 1 кубла метрĕ 430 тенкĕ;*

*касман чус-хăма - 1 кубла метрĕ укçана тӳрех тӳлесен 252 тенкĕ, куçарсан вара -282 тенкĕ;*

*карта тытмалли шăтăрнак - 320 тенкĕ;*

*ещĕксем тумалли хăма - 426 тенкĕ;*

*мунча тата хуралтăсен пурисем - 1 тăваткал метр стенашăн 55 тенкĕ;*

*мунчара çăвăнмалли мунчала - пĕри 1 тенкĕ те 20 пус;*

*мунчаларан тунă кисть - 1 тенкĕ те 50 пус.*

*Вăрман хуçалăхĕ çаплах хуçалăх супăнĕ, рубероид, КамАЗ, ГАЗ-53 автомашинăсен, МТЗ тракторсен шинисем сутать. Укçана тӳрех тӳлеме те, куçарма та пулать.*

*Телефонсем: (8-244) 2-11-92, 2-14-32, 2-12-48.*

*Адрес: Тутарстан, Аксу поселокĕ.*


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информацине пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 863. Заказ № 835.